98
98

# ЕБНОЕ ПѢНІЕ

# НА НОВЫЙ ГОДЪ.

НА ЧУВАШСКОМЪ ЯЗЫКѢ.

Изданіе Православнаго Миссіонерскаго Общества.

КАЗАНЬ.
Типо-литографія Императорскаго Университета.
1894.

98

# МОЛЕБНОЕ ПѢНІЕ

# НА НОВЫЙ ГОДЪ.

НА ЧУВАШСКОМЪ ЯЗЫКѢ.

Изданіе Православнаго Миссіонерскаго Общества.

КАЗАНЬ.
Типо-литографія Императорскаго Университета.
1894.

Отъ Совѣта Братства Св. Гурія печатать разрѣшается. Казань. 21 августа 1893 года. Предсѣдатель Совѣта Братства Св. Гурія, Анастасій Епископъ Чебоксарскій, викарій Казанской епархіи.

## МОЛЕБНОЕ ПѢНІЕ НА НОВЫЙ ГОДЪ.

*Литургія кĕлли пĕтсен, діакон калат*: Ей атте, пилле. *Священник калат*: Ашшийĕн, Ывăлийĕн, Святой Сывлăшийĕн патшалăхĕ пиллĕхлĕ, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех. *Йур*: Амин. *Вул*: Килĕр, патша Туррăмăра пуççапар... *3 хут. Унтан 64-мĕш псалома вулат.* Мухтав, халĕ те. Аллилуйа, аллилуйа, аллилуйа, ей Турă, мухтав Сана. *3 хут.*

*Діакон çак эктеніяна калат.*

Ырă кăмăлпа Турра кĕл-тăвар.

*Йур*: Ей Турă, çырлах.

Çӳлтен пире ырă кăмăл патăр, ђунăмăрсене çăлăнăç патăр, тесе Турра кĕл-тăвар.

Пĕтĕм тĕнђе лăпкă тăтăр, Христос тĕпне тытса тăракан халăхсем лайăх тăђђăр, пур те пĕр ђăн тĕне хутшăнђђăр, тесе Турра кĕл-тăвар.

Çак таса ђиркӳшĕн, Турра ĕненсе, Унтан хăраса, таса ђĕрепе çак ђиркĕве кĕрекенсемшĕн Турра кĕл-тăвар.

Ђиркусене пăхса тăракап Святѣйшій Синодшăн, ырă çыннăмăр Высокопреосвященнѣйшій Архіепископ Владимiршăн, ырă священниксемшĕн, Христос ĕçне тума пулăшакан діаконсемшĕн, ђиркĕвĕн пур çыннисемшĕн, пур халăхшăн Турра кĕл-тăвар.

Ђăн тĕне тытса, сыхласа, пĕтĕм Россiяна хăй ирĕкĕпе тытса тăракап Аслă Патшамăр Император Николай Александровичшĕн, унăн ырă Арăмĕ ђăн тĕне тытса, сыхласа тăракан Императрица Александра Өеодоровнашăн Турра кĕл-тăвар.

Унăн ырă Амăше ђăн тĕне тытса, сыхласа тăракан Императрица Марiя Өеодоровнашăн, Патшанăн хăй вырăнне Патша пулас Шăллĕ ђăн тĕне тытса тăракан Аслă князь Цесаревич Георгiй Александровичшĕн, Патшанăн пур тăванĕсемшĕн, пур тўрисемшĕн, пур çаррисемшĕн Турра кĕл-тăвар.

Вĕсен пур ĕçне те ăнăçлă, лайăх тутăр, Христос тĕнне кураймасăр тăракан халăхсене, хирĕç тăракан тăшманĕсене пурне те çĕнтерсе, вĕсен урисем айне тутăр, тесе, Турра кĕл-тăвар.

Патша пурăнакан хулашăн, çак хулашăн (çак йалшăн), пур хуласемшĕн, пур йалсемшĕн, вĕсенђе

Турра ёненсе пурӑнакан халӑхшӑн Турра кӗл-тӑвар.

Епир халӗ тав-тунине йуратса илтӗр, йурӑхсӑр ҫурисенӗн кӗллине Хӑйӗн ҫӳлти парне вырӑнӗ ҫине илтӗр, ырӑ кӑмӑлӗпе пире ҫырлахтӑр, тесе, Турра кӗл-тӑвар.

Епир кӗл-туни, пире те, Хӑйӗн пур халӑхне те ирӗклӗ, ирӗксӗр тунӑ ҫылӑхсене, иртнӗ ҫулта тунӑ усал ӗҫӗмӗрсене каҫартӑр, тесе, Турра кӗл-тӑвар.

Хӑйӗн етеме савакан ырӑлӑхӗпе ҫак ҫӗнӗ ҫул пуҫламӑшне пиллетӗр, ку ҫула лайӑх пурӑнса ирттерме патӑр, самана лӑпкӑ тӑтӑр, ырӑ ҫанталӑк, таса сывлӑш тӑтӑр тесе, пире ҫылӑхсӑр, сывлӑхлӑ, ҫителӗхлӗ пурӑнма патӑр, тесе, Турра кӗл-тӑвар.

Ҫылӑхӑмӑрсемшӗн пирӗн ҫийе тӗрӗссипе йаракан пур хайарне те пирӗн ҫирен сирсе йатӑр, тесе, Турра кӗл-тӑвар.

Ҫуна пӑсакан пур усал шухӑшсене, ҫылӑхлӑ йӑласене пиртен хӑваласа йатӑр тесе, пире Хӑйӗн заповѣдсем тӑрӑх пурӑнмашкӑн пирӗн ҫӗресене Хӑйӗнҫен хӑракан тутӑр, тесе, Турра кӗл-тӑвар.

Ӑшӑмӑрти тӳрӗ сывлӑша ҫӗнеттӗр, пире ҫӑн тӗне хытӑ тытса тӑма патӑр, пире ырӑ ӗҫсене тума, Хӑйӗн пур заповѣдсене те лайӑх тытса пурӑнма пулӑштӑр, тесе, Турра кӗл-тӑвар.

Ҫăн тĕнтен аташса уйăрăлассине пĕтертĕр, пур ҫĕрте те ҫăн тĕне тытса таса пурăнăҫпа пурăнмалла тутăр тесе, ҫăн тĕнтен уйăрăлнисене пурне те ҫавăрса, Хăйĕн ҫăнлăхне йнлантартăр, вĕсене Хăйĕн ҫăн тĕне тытса пурăнакан халăхĕпе хутшăнтартăр, тесе, Турра кĕл-тăвар.

Хăйĕн ҫăн тĕнпе пурăнакан халăхне, пире пурсăмăра та тĕрлĕ хуйхăран, тĕрлĕ асапран, ҫилĕ-хайартан тĕрлĕ йывăрлăхран пур курăнакан, курăнман тĕрлĕ тăшмантан хăтарса тăтăр тесе, сывлăх, канăҫлăх, вăрăм ĕмĕр патăр, Хăйĕн ĕненекенĕсене йаланах Ангелсен ушкăнĕпе ҫавăрса илсе сыхлатăр, тесе, Турра кĕл-тăвар.

Ей Турă, Хăвăн ырлăхупа пирĕн хута кĕр, ҫăл, ҫырлах, пăхса усра пире.

Хамăрăн святой, таса, ырăлăхлă, мухтавлă, аслă, Турра ҫуратнă, ĕмĕр Хĕр Маріяпа мĕн пур святой ҫынсене асăнса, хамăра хамăр, пĕр пĕрĕмĕре, пĕтĕм пурăнăҫăмăра *Христос* Турă аллине парар.

*Священник*: Сана Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлăшне, тĕрлĕ мухтама, хисеплеме, пуҫҫапма тивĕҫлĕ, халĕ те, кирек хăҫан та, ĕмĕр ĕмĕрех.

*Йурлакан*: Аминь. *Унтан*:

Турă Хăй пире курăвҫĕ, Унăн йаҫĕпе килекен мухтавлă.

*Вара ҫак тропарсене йурлаҫҫӗ:*

*Благодарни суще. 4-мӗш кӗвӗпе.* Ей Турӑ, епир, йурӑхсӑр ђурусем, Санран нумай ырӑлӑх курнӑшӑн Сана тав-тӑватпӑр, Сана аслӑласа мухтатпӑр, ырӑ сунса тав-тӑватпӑр, Санӑн ырӑ кӑмӑлна йурласа аслӑлатпӑр, Хӑвӑн ђурусем Хӑна йуратса калатпӑр: ей пире Ҫӑлакан, пире ырӑлӑх кӑтартакан, мухтав Сана.

Мухтав:

*Твоихъ благодѣяній. 3-мӗш кӗвӗпе.* Ей Патша Турӑ, епир, йурӑхсӑр ђурусем, Санӑн ырӑлӑхусене курма тивӗҫлӗ пултӑмӑр, Сан умна кӑмӑлпа тӑрса вӑй ҫитнӗ таран тав-тӑватпӑр; Сана, пурне те пултаракана, пурне те ырӑлӑх паракана мухтаса калатпӑр: ей пит нумай ырӑлӑхлӑ Турӑ, мухтав Сана.

Халӗ те. *Всея твари Содѣтелю. 2-мӗш кӗвӗпе:*

Ей пур йапалана та пултаракан, вӑхӑтсене, ҫулталӑксене Ху ирӗкӳпе тытса тӑракан Турӑ, ҫакӑ ҫул ҫавӑрӑнӑҫне Хӑвӑн ырӑлӑхупа пилле, пирӗн Патшамӑра, Хӑвӑн хулуна Турӑ Амӑшӗ кӗллипе сыхласа тӑр, пире те ҫӑл.

*Діакон:* Итлесе тӑрар.

*Священник:* Пурсӑра та канӑҫлӑх пултӑр.

*Вулакан*: Санăн сывлăшна та пултăр.

*Діакон*: Ăслăлăх, итлесе тăрар.

*Вулакан*:

*Прокимен 4-мĕш кĕвĕ*: Хама ырăлăх кăтартакан Турра мухтаса йурлам, çӳлти Турă йатне мухтаса йурлам. *Стих*: Есĕ çăлăннăшăн ђĕрем савăнса тăрĕ.

Апостол Павел Тимоѳей патне çырнă çырури сăмахсем. *(зач. 282)*.

Ей Тимоѳей ађам! епир хамăр лăпкă тăрса, йеррипе пурăнса, пур тĕлтен те Турра йурăхлă пулса, таса пурăнасшăн, ђăн малтан Сана пур çынсемшĕн те, патшашăн та, пур пуçлăхсемшĕн те Турра кĕл-тума, тархаслама, ыйтма, тав-тума тархаслатăп. Çапла туни аван, Çăлакан Туррăмăр кăмăлне килет, Вăл пур етемсене те çăласшăн, пурне те ђăна пĕлтересшĕн тăрăшаѓ. Турă пĕрре анђах, Турăпа çынсен хушшинђе тархаслакан пĕр Çын Іисус Христос анђах, Вăл пурне те çăласшăн Хăйне асапланма панă. Ăна ĕмĕр ĕмĕрех аслăласа мухтама тивĕçлĕ, аминь.

*Священник*: Канăçлăх пултăр сана.

*Вулакан*: Санăн сывлăшна та пултăр.

*Діакон*: Ăслăлăх.

*Вулакан*: Аллилуйа (*4-мĕш кĕвĕпе*).

*Унтан діакон калат*: Таса Евангеліерен вуланине ӑнлама пар пире, тесе Турра кӗл-тӑвар.

*Йурлакан*: Ей Турӑ, ҫырлах *(3 хут)*.

*Діакон*: Ӑслӑлӑх, ҭипер тӑрса таса Евангеліене итлер.

*Священник*: Пурсӑра та канӑҫлӑх пултӑр.

*Йурлакан*: Санӑн сывлӑшна та пултӑр.

*Священник*: Лука ҫырнӑ таса Евангеліери сӑмахсем *(зач. 13)*.

*Йурлакан*: Мухтав Сана, ей Турӑ, мухтав Сана.

*Діакон*: Итлесе тӑрар.

*Священник вара ҫак Евангеліене вулат*:

Пӗрре Іисус Хӑй ӳснӗ хулана Назарета пынӑ та, Вӑл Хӑй йӑлипе шӑмат-кун вӗсенӗн Синагогине кӗрсе кӗнеке вулама тӑнӑ. Ӑна Исаія пророк кӗнекине панӑ; Вӑл кӗнекине уҫнӑ та, унта: Туррӑн Сывлӑшӗ Ман ҫийӗмре; Вӑл Мана кӗлӗмҫӗсене ырӑ хыпар калама, ҭӗри ҫунса тӑракансене лӑплантарма, тыткӑнрисене ирӗке тухассине, суккӑррисене куракан пулассине калама, халран кайнисене ирӗке кӑларма, Туррӑн ырӑлӑхӗ вӑхӑтне каласа вӗрентме суйларӗ, тесе ҫырнӑ сӑмахсене тӗл пулнӑ. Вара кӗнекине хупса астуса тӑракана панӑ та, ларнӑ; синагогари ҫынсем пур те Ун ҫине пӑхса тӑнӑ. Вӑл вара вӗсене кала пуҫланӑ: кӗнекери есир илтнӗ

сӑмахсем пайан вырӑна килҫӗҫ, тенӗ. Вӗсем вара пур те Іисус каланине тӗрӗсе хунӑ.

*Йурлакан:* Мухтав Сана, ей Турӑ, мухтав Сана.

*Унтан діакон ҫак эктеніяна калаҭ:*

Пурсӑмӑр та пӗтӗм ҫунтан-вартан, пӗтӗм ҫӗререн калар.

*Йурлакан:* Ей Турӑ, ҫырлах.

Ей пурне те тытса тӑракан Турӑ аттемӗрсепӗн Турри, Сана кӗл-тӑватпӑр, илтсе ҫырлах.

*Йурлакан:* Ей Турӑ, ҫырлах.

Ей Турӑ, Санӑн ырӑлӑх нумай, ҫырлах пире, Сана кӗл-тӑватпӑр, илтсе ҫырлах.

*Йурлакан:* Ей Турӑ, ҫырлах *(3 хут).*

Тата ҫӑн тӗне тытса, сыхласа, пӗтӗм Россіяна хӑй ирӗкӗпе тытса тӑракан Аслӑ Патшамӑр Император Николай Александровичшӗн кӗл-тӑвар: ӑна патшалӑхне лайӑх тытса тӑма патӑр, хӑватлӑх, ырӑ пурӑнӑҫ, ырӑ кӑмӑл, сывлӑх патӑр, ҫӑлӑнӑҫ патӑр, пуринҫен ытла Туррӑмӑр ӑна пур ӗҫре те пулӑшса, унӑн ӗҫӗсене ӑҫтарса пытӑр, хирӗҫ тӑракан тӑшманӗсене пурне те ҫӗнтерттерсе, унӑн ури айне тутӑр, тесе, Турра кӗл-тӑвар.

Тата унӑн ырӑ Арӑмӗ, ҫӑн тӗне тытса, сы-

хласа тăракан Императрица Александра Өеодоровнашăн кĕл-тăвар.

Тата унăн ырă Амăшĕ ђăн тĕпе тытса, сыхласа тăракан Императрица Марія Өеодоровнашăн, Патшанăн хăй вырăнне Патша пулас Шăллĕ ђăн тĕпе тытса тăракан Аслă Князь Цесаревич Георгій Александровичшăн, Патшанăн пур тăванĕсемшĕн те кĕл-тăвар.

Тата ђиркӳсене пăхса тăракан Святѣйшій Сѵнодшăн, Хусанпа Сĕве хулийĕп ырă çыннăмăр Высокопреосвященнѣйшій Архіепископ Владиміршăн, Христосшăн тăрăшса пурăнакан пур тăванăмăрсемшĕн те кĕл-тăвар.

Пире çăлакан ырă кăмăллă Патша Туррăмăр, пире ђурусене пит нумай ырăлăх кăтартнăшăн епир, йурăхсăр ђурусем, хăраса, ђĕтресе тав-тăватпăр, Сана, Турра, пуççапса мухтав кĕлли кӳретпĕр, йăваш кăмăлпа тархаслатпăр: Хăвăн ђурусене пур усалтан та хăтар, епир лайăх ĕмĕтленнине Ху ырă кăмăллă тăрăх йаланах çитер, ђунтан Сана тархаслатпăр, илтсе çырлах.

Пуçлапакан çĕнĕ çул çавăрăнăçне Хăвăн ырăлăхупа пилле, пире пĕр пĕринпе хирĕçсе пурăнасран, килĕштереймесĕр пурăнасрап, пĕр пĕринпе вăрçса пурăнасран ђарса тăр; пĕр пĕринпе ырă кăмăллă, ђунтан-вартан хытă йуратса, ырă ĕçсем туса лăпкă,

йӗркелӗ пурӑнма пар, тесе кӗл-тӑватпӑр, ей ырӑ Турӑ, илтсе ҫырлах.

Иртнӗ ҫул хисепсӗр нумай тунӑ пирӗн йӗркесӗр усал ӗҫӗмӗрсене ан асӑн, усал ӗҫӗмӗрсемшӗн пире хирӗҫ ан тавӑр, пире нумай ырӑлӑхна кӑтартмасӑр ан хӑвар, тесе кӗл-тӑватпӑр, ей ырӑ кӑмӑллӑ Турӑ, илтсе ҫырлах.

Малтан кирлӗ ҫӑмӑрсене те, кайран кирлӗ ҫӑмӑрсене те вӑхӑҭӗпе пар, усӑлӑ сывлӑм ӳкер, лӑпкӑ, сиплӗ ҫил вӗртер, ӑшӑ хӗвел пӑхтар, тесе кӗл-тӑватпӑр, ей тӗрлӗ ырӑлӑх паракан Турӑ, илтсе ҫырлах.

Хӑвӑн ҭӑн тӗнпе пурӑнакан таса халӑхна асра тытса тӑр, ӑна тӗреклӗ, хӑватлӑ ту, ӑна ӗрҭесе йышлӑланма пар, ӑна килӗшӳлӗ усра, ӑна тамӑк вӑйӗ сийен тӑвасран, курӑнакан, курӑнман тӑшмансем пусмӑрласа ҫӗнесрен ӗмӗрех сыхласа тӑр, тесе кӗл-тӑватпӑр, ей пурне те тытса тӑракан Патша Турӑ, илтсе ҫырлах.

Хӑна хурласа пурӑнакан Агарянсен пур усаллӑхне тӗпӗ-йӗрӗпе пӗтер, вӗсен патшалӑхне ҭасрах пӗтерсе, тӗрӗс ӗненекенсен аллине пар, тесе кӗл-тӑватпӑр, ей нумай хӑватлӑ Турӑ, илтсе ҫырлах.

Ҫак пуҫланакан ҫулталӑкра та, епир пурӑнса ирттерес ӗмӗрте те пире выҫлӑхран, хайар ҭиртен,

çĕр ђĕтресе, шыв тулса пĕтересрен, пăр çапасран, вут-кăвартан, хĕç-пăшалтан, йут тăшмансем килсе пусмăрласран, пĕр-пĕринпе килĕштереймесĕр вăрçса пурăнасран, вĕлерсе çўрекен ђас йерекен ђиртен, хуйхăран, йывăрлăхран хăтарса усратăр, тесе, кĕл-тăватпăр, ей ырă кăмăллă Турă, илтсе çырлах.

*Священник возглас калат̆*: Ей Çăлакан Туррăмăр, илт пире, пĕтĕм тĕнђе Сан çине шанса тăрат̆, тасти инçе тинĕс çинђе пурăнакансем те Сана анђах ĕмĕтленеççĕ; ей пире тытса тăракан Турă, пире çылăхлă çынсене Хăвăн ырă кăмăлупа хĕрхен, çырлах пире. Есĕ етеме хĕрхенекен, етеме сывакан Турă, Сана Ашшĕне, Ывăлне, Святой Сывлăшне аслăласа мухтатпăр, халĕ те, кирек хăçан та, ĕмĕр ĕмĕрех.

*Йурлакан*: Амин.

*Діакон*: Турра ђăркуççи çине тăрса татах кĕл-тăвар.

*Йурлакан*: Ей Турă, çырлах *(3 хут)*.

*Священник çак кĕлге вулат̆*:

Ей Патша Туррăмăр, Есĕ пурăнăç паратăн, вилĕмсĕр тăватăн, мĕн пур курăнакан, курăнман йапаласене пурне те Есĕ пултарнă, вăхăтсене, çул-

талăксене Ху ирĕкӳпе тытса тăратăн, Есĕ пурне те ăслăлăхупа, ырăлăхупа пăхса усратăн. Ку таранҫҫен пирĕн пурăнăҫра кăтартнă ырăлăхусемшĕн епир Сана тав-тăватпăр, ей нумай ырăлăхлă Турă, Сана кĕл-тăватпăр: пуҫланакан ҫĕнĕ ҫул ҫаварăнăҫне Хăвăн ырăлăхупа пилле; Хăвăн савнă ҫуруна, ҫăн тĕне тытса, сыхласа, пĕтĕм Россіяна хăй ирĕкĕпе тытса тăракан Аслă Патшамăра Император Николай Александровича, унăн ырă Арăмне ҫăн тĕне тытса, сыхласа тăракан Императрица Александра Θеодоровнана, унăн ырă Амăшне ҫăн тĕне тытса, сыхласа тăракан Императрица Марія Θеодоровнана, Патшанăн хăй вырăнне патша пулас Шăллĕ, ҫăн тĕне тытса тăракан Аслă Князь Цесаревич Георгій Александровича, Патшанăн пур тăванĕсене те сыхласа усра. Вĕсене пĕр май сывă усраса, вăрăм кун ҫул пар, вĕсен ырă ĕҫĕсене пурне те ăнăҫлă ту. Хăвăн пур халăхна та ырăлăхна ҫӳлтен антарса пар, сывă усра, ҫăл, пур тĕлтен те ăнтарса пыр. Хăвăн таса ҫиркӳне, патша пурăнакан хулана, ҫак хулана (ҫак йала), пур хуласене, пур ҫĕрсене тĕрлĕ усал пусмăрласран сыхласа, вĕсене каплĕ, лăпкă пурăнăҫ пар; Сана ĕмĕртен малтанхи Атте Турра, пĕртен пĕр Ывăлупа, пурне те ҫĕрĕ тăвакан Святой Сывлăшупа

пĕрле, епир аслă̆лакан Турра, йалапах тав-туса, Сапă̆н таса йатна мухтаса йурлама тивĕçлĕ ту пире. Ей пире ырă̆лă̆х кă̆тартакан Турă̆, ĕмĕр ĕмĕрех мухтав Сана.

*Йурлакан*: Амин.

*Унтан вара йурлакансем „Тебе Бога хвалимъ“ йурлаççĕ.*

*Отпуст*: Пире çă̆ласшă̆н саккă̆ră̆мĕш кунне ўтне кастарнă̆ пирĕн ђă̆п Турă̆ Христос, Хă̆йĕн ђă̆н таса Амă̆шĕ кĕллипе, мĕн пур Святой çынсен кĕллипе пире каçартă̆р, пире çă̆лтă̆р: Вă̆л етеме савакан ырă̆ Турă̆.

*Унтан вара діакон Патшашă̆н, унă̆н тă̆ванĕсемшĕн хытă̆ сасă̆па многолѣтіе калат.*

пĕрле, епир асăнакан Турра, пилелĕх таса-туса.
Сапăн таса йăлпа мухтаса йурлама тивĕслĕ ту пире.
Ей пире çырлăх кăтартакан Турă, ĕмĕр ĕмĕрех мухтав Сана.

*Пурăнаканс:* Амин.

*Унтан вара вулаканĕ: „Тебѣ Боже хвалимъ" вулассĕ.*

*Отпустъ:* Пире çăласшăн савнăрăмĕш куне тăнĕ кăстарсă пирен çăл Турă Христос, Хăйĕн çăл таса Амăшĕ кĕлипе, мĕн пур Святой çынсен кĕлипе пире каçартăр, пире çăлтăр: Вăл степе сапакан ырă Турă.

*Унтан вара дьяконъ Литимши, уйăх пайĕс-семейи лицъ своихъ многолѣтіе поетъ.*